Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

49 (7474) № ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи июнĕн (çĕртме) 16-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Июнĕн 17-мĕшĕ – Медицина ĕçченĕсен кунĕ

**СЫВЛĂХ СЫХЛАВĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире професси уявĕпе чĕререн саламлатăп!

Сирĕн ĕç чăннипех те чыслă та хисеплĕ. Эсир хăвăра шанса панă ĕçе тивĕçлипе пурнăçлатăр. Сирĕн аллăрсене çак тĕнчери чи хаклине шанса панă – çынсен сывлăхне.

Нацин пурнăç йĕркин тата ăс-хакăл сывлăхĕ – общество аталанăвĕн тĕп тытăмĕ. Нумай енчен сирĕн профессионализма, палăртнă тĕллев патне ăнтăлнине тата ответлăх туйăмне пула Чăваш Республикинче сывлăха сыхлас ĕç системинче палăрăмлă улшăнусем пулса иртеççĕ. Медицина пулăшăвĕн пахалăхĕ ӳсет, сывлăх сиплев учрежденийĕсен пурлăхпа техника бази çирĕпленет, демографи тĕлĕшĕнчи ларутăру лайăхланать. Васкавлă медицина пулăшăвĕн автомобилĕсен паркне пĕтĕмпех çĕнетнĕ, травматологин, ортопедин тата эндопротезированин центрĕпе пĕрлех эпир республикăра чĕрепе сосудсен хирургийĕн центрне уçма планлатпăр.

Шанса тăратăп: сирĕн пуян опыт, ăсталăх, çынсен нушине йышăнма хăнăхни хăвăрăн умри задачăсене ăнăçлă татса пама, ĕçре çитĕнӳсем тума пулăшĕç. Сире ывăнма пĕлми ĕçшĕн, ыр кăмăллăхшăн, çынсем тĕлĕшпе тимлĕ пулнишĕн тав сăмахĕ калатăп. Пурне те çирĕп сывлăх, ăнăçусем, телей сунатăп!

**Н.В. ФЕДОРОВ,**
**Чăваш Республикин Президенчĕ.**

**МЕДИЦИНĂН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ, СЫВЛĂХ СЫХЛАВĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

Сире професси уявĕпе – Медицина ĕçченĕсен кунĕ ячĕпе чĕререн саламлатăп!

Сирĕн професси чи çынлăхли кăна мар, чи ответли те. Эсир çынсен сывлăх хуралĕнче тăратăр, çынсен сывлăхне çăлса хăваратăр. Эпир медицина пулăшăвĕ илме сирĕн пата пыратпăр, хӳтлĕхпе ăнланулăх кĕтетпĕр. Сирĕн алăсем ăста та ырă кăмăллă кăна мар, сирĕн чĕресем те ыр туйăмлă.

Паян çĕршывра тата республикăра «Сывлăх» наци проекчĕ пурнăçа кĕрсе пырать. Çакă çĕнĕ технологисем ĕçе кĕртме, медицина учрежденийĕсене хальхи оборудованипе тивĕçтерме, пĕтĕмĕшле практика врачĕсен офисĕсене уçма, çынсен диспансеризацийĕпе иммунизацине лайăхлатма май парать т. ыт. те. Медицина сферинче улшăнусем нумай, апла пулин те сирĕн ăшă кăмăл тата кирек хăçан та чирлĕ çынна пулăшма хатĕр пулни яланлăхах.

Пĕтĕм чун-чĕререн сире телей, çирĕп сывлăх, сире тата сирĕн çемьесене ăнăçу сунатăп.

**Павел СЕМЕНОВ,**
**Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕ,**
**«Единая Россия» парти фракцийĕн членĕ.**

**УВАЖАЕМЫЕ РАБОТНИКИ ЗДРАВООХРАНЕНИЯ!**

Страховая больничная касса г. Новочебоксарска от всей души поздравляет вас с профессиональным праздником – **Днем медицинского работника!**

Ваша профессия – особая, требующая высочайшего профессионализма, осознания всей степени ответственности за жизнь людей. Вы помогаете человеку вновь обрести не только здоровье, но и жизненные силы, уверенность в себе. Спасибо вам за ваш профессионализм, трудолюбие, самоотдачу, высокое служение долгу врачевателя и милосердие. Желаю вам крепкого здоровья, долголетия, терпения, мира и добра. Пусть Ваши дела озаряет успех и удача.

**Генеральный директор МУП “Страховая больничная касса”**
**Т.М. ВИШТЫНЕЦКАЯ.**

Райадминистрацире

## Хисеп грамотисене тивĕçнĕ

Район администрацийĕн финанс пайĕ, районти социаллă хӳтлĕх пайĕ, Ильич яч. хис, «Герой» хуçалăхсем, «ДаАн» чикĕллĕ яваплăхлă общество тата выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци коллективĕсем ыйтнине тивĕçтерсе, район администрацийĕн пуçлăхĕн июнĕн 7-мĕшĕнчи 275 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăлама йышăннă:

1. Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Федор Аверкиевич ЕГОРОВА**, Ильич яч. хис. хуçалăхĕн тĕп агрономне;

– **Николай Димитриевич ИВАНОВА**, Ильич яч. хис. хуçалăхăн слесарь-юсавçине;

– **Юлия Афанасьевна ИВАНОВАНА**, Ильич яч. хис. хуçалăхăн машинăпа ĕне сăвакан операторне;

– **Маргарита Михайловна МИХАЙЛОВАНА**, «ДаАн» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн тĕп бухгалтерне;

– **Мария Ивановна МИХАЙЛОВАНА**, «Герой» хуçалăхăн уйхир уйрăмĕн управляющине;

– **Валентина Алексеевна СОЛОВЬЕВАНА**, «Герой» хуçалăхăн участок управляющине.

2. Тĕрĕслевпе финанс ĕçĕ-хĕлĕнче нумай çул хушши тăрăшса вăй хунăшăн **Вера Мефодьевна КИРИЛЛОВАНА**, район администрацийĕн финанс пайĕн финанс тĕрĕслевĕ енĕпе ĕçлекен тĕп специалистне.

3. Патшалăх ветеринари службинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн:

– **Надежда Николаевна НИКОЛАЕВАНА**, выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцин тĕп бухгалтерне;

– **Иульяна Георгиевна ПРОХОРОВАНА**, «Зооветснаб» патшалăх унитарлă предприятийĕн Муркашри ветеринари аптекин заведующине.

4. Социаллă хӳтлĕх сферинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн **Наталия Валерияновна ЯСТРЕБОВАНА**, ЧР Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертсе пыракан специалист-экспертне.

Ĕçпе юрă уявĕнче

## Аки-сухи вĕçленсен, тухар-и уява пĕрле




Çăмăлах килмерĕ ял ĕçченĕшĕн кăçалхи çур аки. Çурхи кун вара вăхăта перекетлесе васкарах ĕçлеме хистерĕ. Çапах та яваплă ĕçе кирлĕ шайра, пысăк пахалăхпа ирттерме пултарчĕç çĕр ĕçченĕсем.

Йăлана кĕнĕ тăрăх акасуха ĕçĕсем вĕçленнĕ хыççăн акатуйсем пуçланаççĕ. Малтан вĕсем хуçалăхсенче иртрĕç. Июнĕн 10-мĕшĕнче вара районти Акатуй пулчĕ. Лантăш вăрманĕн уçланки пур енĕпе те ял ĕçченĕсене кĕтсе илме хатĕрри курăнчĕ. Кăçалхи Акатуя Ача çулталӑкне тата Вырăс чĕлхи çулталăкне халалланă.

Чи малтанах уçланкăна пухăннисене район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов саламларĕ. Вăл пурне те уяв ячĕпе саламласа телей, ырлăх-сывлăх, ăнăçусем сунчĕ, Акатуйăн 54-мĕш уявĕ уçăлни çинчен пĕлтерчĕ.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

**Сăн ӳкерчĕкре: Муркашсене акатуй уявĕпе Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров саламлать.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Çырăнтару – 2007

## Райхаçат çырăнакансене парнесем кĕтеççĕ



**Хаклă вулакансем! Çырăнтару тапхăрĕ вĕçлениччен çур уйăх кăна юлчĕ. “Çĕнтерӳ ялавне” çырăнса илме васкăр!**

**“Çĕнтерӳ ялавне” 6 уйăха çырăнакансем хушшинче лотерея вылявне ирттеретпĕр.**

**Чи телейлисене тĕслĕ телевизор, СВЧ-кăмака, DVD-плеер, утюг, чейник, телефон, миксер, фен тата ытти хаклă та паха парнесем кĕтеççĕ.**

**Иккĕмĕш çур çулта та пĕрле пулар!**

**Район хаçатне 6 уйăха çырăнмалли хак – 147 тенкĕ те 42 пус.**

**Райхаçат редакцийĕ.**



Юбилей

## *Саламлатпăр*



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, мăшăра, юратнă аннене, хунямана, ырă кăмăллă асаннене – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Раиса Димитриевна ОНЬКОВАНА** 60 çул тултарнă ятпа саламлатпăр.

Сана çак паллă кун ячĕпе саламласа пурнăçра мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Эсĕ пурри – пирĕн савăнăç, пуянлăх. Эсĕ ырă кăмăлупа, ĕçченлĕхӳпе, тирпейлĕхӳпе палăрса тăратăн. Сана эпир юрататпăр, ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр, çĕр çул пурăнма сĕнетпĕр. Яланах çирĕп сывлăхлă пул. Мăшăру, ачусемпе мăнуксем, çывăх тăванусем сана яланах савăнăçпа телей, савăк кăмăл парнелеччĕр.

Хаклăран та хаклă аннемĕр, эс пурришĕн эпир савăнатпăр, хамăра çав тери телейлĕ туятпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕсем, кинĕ, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**



Хаклă çыннăмăра, мăшăра, аттене, ывăлăмăра, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертӳçине **Игорь Васильевич НИКОЛАЕВА** çак кунсенче пулса иртнĕ çуралнă кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Çавна май чи ырри пултăр Сирĕн кăна, ĕмĕт-тĕллевĕр килтĕр чăна, юнашар çирĕп çын пулни вăл – чăн телей. Çавăнпа та Турри пехиллетĕр чăваш юманĕн çирĕплĕхне. Çемьере вара килĕшӳпе тату пурнăç, юрату хуçаланччăр.

Икĕ ĕмĕрлĕх кун-çул сунса çапла калатпăр:

Ырă кăмăлушăн, ăшă йăл куллушăн,
Тăрăшнăшăн пирĕншĕн ывăнми куллен,
Пирĕн чунсенче те тараватлăх пурришĕн
Тавах Сире пĕтĕм кăмăлтан.

Ĕçне кура хисепĕ, теççĕ халăхра. Çак хисепе вара чылай кăтарту çирĕплетет. Хуçалăх ĕçĕ-хĕлĕшĕн малаллах ăнтăлни тата хăвăр тивĕçнĕ чылай Хисеп грамотисемпе Тав çырăвĕсем. Акă тата районти Акатуй уявĕнче Чăваш Республикин Президентĕнчен Н.В. Федоровран тивĕçнĕ Тав çырăвĕ те Сирĕн тăрăшулăхах çирĕплетет. Апла пулсан малашне те ăраскал пултăр ĕмĕрех Сирĕнпе.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ачисем, ашшĕпе амăшĕ, тăванĕсем, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх ĕçченĕсем.**

«Пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту»

## Хăшне ытларах шанма пулать?

***Хаçатăн июнĕн 9-мĕшĕнчи номерĕнче «Раççейри радио» регионти редакцийĕ «Пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту» передачăн пичет вариантне хаçатра пичетлесси пирки пуçарупа тухнине эпир пĕлтернĕччĕ. Пĕрремĕш ыйтусем пур ĕнтĕ.***

**Ыйту:** **«Раççей политика пурнăçĕнче партисем нумай йĕркеленчĕç. Вĕсен программисемпе паллашнă май çакă курăнать: вĕсем пурте тенĕ пекех пĕр евĕрлĕ. Эпĕ çухалса кайрăм. Хăшне шанма пулать? Эсир мана мĕн сĕнме пултаратăр?**

**Хурав:** Çĕршывра тĕп партисенчен пĕри пулса тăракан «Единая Россия» партин Чăваш Республикинчи уйрăмĕн ертӳçи, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ **Михаил Алексеевич МИХАЙЛОВСКИЙ** парать: «Политика арени çине хальхи вăхăтра нумай пулмасть йĕркеленнĕ çĕнĕ партисем сахал мар тухаççĕ. Вĕсен ячĕ-сумĕ те, политика опычĕ те пĕчĕк. Вĕсен программисем вăхăтпа тĕрĕсленмен, ытларах чухне дакларации евĕрлĕ. Çав вăхăтрах «Единая Россия» парти çине тимлĕх уйăрсан йăнăшмăр. Вăл кăна хальхи вăхăтра тĕп вăй пулса тăрать, çĕршыв тата республика пурнăçне пысăк тӳпе хывать. Ку парти хăй тунă йышăнусемшĕн ответлăха теприсем çине хумасть.

Парти ретĕнче патшалăхăн, хуçалăх ĕçĕ-хĕлĕн тата культурăн опытлă та паллă ĕçченĕсем. Чăннипех те вăл паянхи куна политика вăйĕ пулса тăрать.

Патшалăх Думинче унăн фракцийĕ чи йышли. «Единая Россия» партин кăна уçăмлă программа пур – В. Путин программи. Çак парти членĕсем хутшăннипе пĕрремĕш хут çĕршывăн виçĕ çулхи бюджетне туса хатĕрленĕ. Паллă ĕнтĕ, хăш партие суйласа илесси вăл сирĕн ирĕк, анчах та сăмаха ĕçпе çирĕплетсе пыракансене суйласа илсен йăнăшмăр тесе çирĕплетме пултаратăп».

Асăрхаттаратпăр: «Пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту» передачăна ĕç кунĕсенче «Раççейри радио» тата «Маяк» радио» хумĕсем çинче те итлеме пултаратăр. Ăна Евгений Слепов депутат ертсе пырать.